# Чăваш чĕлхи кунне ирттермелли сценарий

*ИГНАТЬЕВА Алевтина Александровна*
*Муркаш район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн методисчĕ*

*Сцена çине ачасем алран-алла тытăнса ушкăнпа вăййа тухаççĕ.*
*Вăйă "Купăста пуçлă"*
*Юрă "Хурăн çулçи"*

1-мĕш ертсе пыракан: – Ачасем, мĕншĕн хытă шавлатăр? Аякранах илтĕнет-çке!

Ачасем: 1. – Паян эпир Чăваш кунне уявлама пухăнтăмăр.
2. – Часах пуçланмалла терĕç те...

1-мĕш ертсе пыракан: – Апла пулсан эсир хатĕр-и?
Ачасем: – Хатĕр, хатĕр!
– Хаваспах

1-мĕш ертсе пыракан: Паянхи уява уçма вĕрентӳ пайĕн пуçлăхне (шкул директорне, ял администраци пуçлăхне...) сăмах паратăп.

Вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе ачасене саламлать, лайăх вĕренекен ачасене грамотăсемпе хавхалантарать, вĕрентекенсене укçа конверчĕсем алла парать, тав сăмахĕ калать.

1-мĕш ертсе пыракан: "Кала, юлташ, мĕн хаклă саншăн
Хальхи пуян çак тĕнчере?"–
Тесе ыйтсан, сывламăп ассăн,
Эп калăп пат: тăван чĕлхе!
Чăваш чĕлхи!
Унпа чĕвĕлтететĕп эпĕ
Атте-анне чĕлхи! Çиç ĕмĕр!
Эп сансăр хăрăк тунката:
Чĕлхе пулсассăн та – чĕлхесĕр,
Эп суккăр – куç пулсассăн та.

2-мĕш ертсе пыракан: Ан тиркесем чĕлхемĕре,
Ан хăй ăна начар теме,
Унпа сана аннӳ ӳстернĕ
Юрла-юрла хуллен сиктернĕ.
Савар, мухтар чĕлхемĕре,
Ăна усрар чыс-хисепре,

Унпа эпир ĕçе вĕреннĕ
Çӳл тӳпене çити çĕкленнĕ.
Упрар тăван чĕлхемĕре,–
Чун-чĕрери хĕлхемĕре!

1-мĕш ертсе пыракан: – Чăваш чĕлхи! Эс чăваш вăрманĕ пек ватă та патвар. Манăçми чăваш юманĕ пек çирĕп. Аслă вĕрентекенĕмĕр И. Я. Яковлев тăрăшнипе хăвăн хăватна çухатмасăр çултан-çул тĕреклене пыратăн.

2-мĕш вĕрентекен: Ахальтен мар ĕнтĕ чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çапла каланă: "Чăваш поэзин чăн тӳпинче икĕ çутăран та çутă çăлтăр ялтăртатать: пĕри – Константин Иванов, тепри Çеçпĕл Мишши."

*Сцена çине 3 ача тухать*

1-мĕш ача: Эс пирĕнтен те çамрăкрах
Чăваш поэзин чаплă ашшĕ
Эс – иртнĕ кун. Çав вăхăтрах
Эс халăх кăмăлĕн малашĕ.

2-мĕш ертсе пыракан: – Чăваш юрри –сăввин кĕрнеклĕ ăсти К. В. Иванов çуралнă кунне палăртса Атăлпа Урал хутлăхĕ тăрăх шăхлич-шăпăр сасси йыхравлăн янăраса тăрĕ.

2-мĕш ача: Вăл, çурхи юр айĕнчен
Пĕччен тухнă чечек пек,
Ирхи çутă умĕнчен
Хăпаракан çăлтăр пек.

3-мĕш ача: Кĕçтенттин Иванов, эс чăваш чĕлхине
Сăввине-юррине,- тăван халăх мулне
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса, çӳпçене тултарса
Парнелерĕн пире кăмăлтан ыр сунса.

1-мĕш ертсе пыракан: – Чăваш литературинче К. В. Иванов ячĕ – Шурăмпуç çăлтăрĕ пекех. Çакă аслă поэта Пушкăрт Республикинчи Слакпуç ялĕ сĕткен парса ӳстернĕ. Вăл 1890 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче çутă кун курнă.

2-мĕш ертсе пыракан: – Слакпуç. Çак ял умĕнче эпир ĕмĕрех пуç таятпăр. Кунта, асамлă та илĕртӳллĕ вырăнта, пирĕн юрату, чăваш халăхĕн мухтавлă поэчĕ К. Иванов çуралнă. Слакпуç – поэзи сăпки: илемлĕ тавралăх, пуян сăмахлăх, пархатарлă йăла-йĕрке, паттăр пулăмсемлĕ аваллăх – К. В. Иванов пултарулăхне витĕм кӳнĕ çăлкуç.

1-мĕш ертсе пыракан: – Вăл пирĕншĕн ăста лиро-эпик

2-мĕш ертсе пыракан: – Куçаруçă

1-мĕш ертсе пыракан: – Драматург

2-мĕш ертсе пыракан: – Педагог

1-мĕш ертсе пыракан: – Фольклорист

2-мĕш ертсе пыракан: – Музыкант (кĕвĕçĕ)

1-мĕш ертсе пыракан: – Художник

2-мĕш ертсе пыракан: – Декоратор

1-мĕш ертсе пыракан: – Чăвашсен пĕрремĕш фотохудожникĕ

2-мĕш ертсе пыракан: – Редактор

1-мĕш ертсе пыракан: – Шухăшлавçă

2-мĕш ертсе пыракан: – Ал-ĕç ăсти (пичетлемелли машинкă ăсталакан)

1-мĕш ертсе пыракан: – Сăвăç амăшĕ, Евдокия Васильевна каланă тăрăх "Кĕçтенттин çамрăк чухнех питĕ йăваш ачаччĕ, ачасемпе вылясах çӳреместчĕ. Картишĕнче ларатчĕ те, тăмран ĕнесем, лашасем, сурăхсем туса аташатчĕ. Ытти ачасем те пуçтарăнатчĕç ун патне, вăл вĕсене те тăмран вылямалли япаласем тума вĕрентетчĕ."

2-мĕш ертсе пыракан: – Ашшĕпе К. Иванов мĕнле калаçни çинчен: "Хальхи самана" сăвăран...

Ачаш кăна ачам пур,
Пĕртте хăпа пĕлмерĕ.
Апат çисе ларнă чух
Аран çилĕ килмерĕ.
"Çыру пĕлме, çын пулма
Ялти шкула яр-ха, тет,–
Çыру пĕлни мĕн тума
Кирлĕ çынна атте?" тет.
– Ачам, ачам, ан йĕтет,
Илтес кунта ху илтĕн,
Хут вĕренни уссине,
Хут вĕренсен, ху пĕлĕн,
Çитес çула çитсессĕн,
Пăртак ăс-пуç кĕрсессĕн,
Ярăп акă сана та
Ялти шкула ăс пухма
Турă хушсан, çын пулсан
Курăн Чĕмпĕр хулине.
Ĕнтĕ, ачам, самана
Ĕлĕкхи мар кучуне (ку чухне) – (К. Иванов)

*Вĕренекенсем К. В. Иванов пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштараççĕ. Сцена çине пилĕк ача тухать.*

1-мĕш ача: Кĕçтенттин 1 çул хушши Пелепейри хула шкулĕнче вĕреннĕ. Мещенсемпе çутă тӳмеллĕ чиновниксен ашкăнма юратакан ачисем ăна, чăваш ачине, чылаях кӳрентернĕ. Вăл, 1903 çулта Пелепейри шкула пăрахса, çав çулах, кĕркунне, Чĕмпĕрте И. Я. Яковлев уçнă шкула – чăваш çамрăкĕсен 1-мĕш университетне, хатĕрленӳ класне пырса кĕнĕ. Акă мĕнле аса илет М. Трубина ун çинчен: "1903 çулта эпĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулне хатĕрленӳ класне вĕренме кĕнĕччĕ. Хамăрпа пĕрле вĕренекен ачасем хушшинче пĕр хура çӳçлĕ, илемлĕ сăн-питлĕ ача пурччĕ. Çав тери лăпкă, тӳлек ачаччĕ вăл. Калаçнă чух унăн питçăмартисем пăт путса çавраланатчĕç. Константин Иванов теттĕмĕр эпир вăл ачана."

2-мĕш ача: 1905-1907 çулсенчи революци çĕкленĕвĕ Чĕмпĕрти ăс-хакăл вучахне те пырса тивнĕ. Революциллĕ шухăшсем Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасем хушшинче те уççăнах палăрма пуçлаççĕ. Çак юхăма хутшăннăшăн 37 ачана шкултан кăларса яраççĕ. Вĕсем хушшинче К. Иванов та пулнă.

3-мĕш ача: Вара Кĕçтенттин тăван ялне таврăннă та хресчен ĕçне кӳлĕннĕ, май килнĕ хушăра халăх сăмахлăхне пухнă.

4-мĕш ача: Çав çулах, 1907 çулхи кĕркунне И. Я. Яковлев К. Иванова Чĕмпĕре чĕнсе илет те вырăсларан чăвашла кĕнекесем куçарма хушать. Çак ĕçе сăвăç хавхаланса тытăнать. Паллă вырăс поэчĕсен чылай сăвви-юррине куçарать, чăвашла илемлĕ произведенисем хайлать.

5-мĕш ача: "Чăваш букварĕ" валли сăвăсем çырать, саспалли-ӳкерчĕксем хатĕрлет, чăвашла вĕренӳ кĕнекисене редакцилет, калавсемпе юмахсем, сăвăсем çырать, ӳкерчĕксем тăвать. Кĕмĕл шăнкăрав пек шăнкăртатса юхакан "Нарспи" поэма çырать.

1-мĕш ертсе пыракан:– "Нарспи" – этемĕн ырă шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене хускатакан, чăннипех те ырра вĕрентекен илемлĕ хайлав.

2-мĕш ертсе пыракан: – Нарспи – çуркунне юрри

1-мĕш ертсе пыракан: – Çурхи хĕвел ăшши

2-мĕш ертсе пыракан: – Ешĕл вăрман

1-мĕш ертсе пыракан: – Йывăççен, чечексен шăрши

2-мĕш ертсе пыракан: – Çурхи вĕçен кайăксен сасси

1-мĕш ертсе пыракан: – Вăл – шыв-шурăн кĕмĕл шăнкăравлă сасси

2-мĕш ертсе пыракан: – Халăха савăнтарни поэта савăнтарнă, халăха хурлантарни – хурлантарнă, чун-чĕрене ыраттарнă. Вăл çамрăклăх вăйĕпе, пурнăç туртăмĕпе çиçсе тăрать.

1-мĕш ертсе пыракан: – Ун ячĕ пулчĕ Атăл пек хăватлă

Çĕклерĕ вăл чăваш поэзине.
Сетнерпеле Нарспи кервен çунатлăн
Халь вĕçсе тухрĕç çут тĕнче умне.

Ачасем "Çӳллĕ валак патĕнче", "Çимĕк иртсен", Сетнерпе Нарспи монологĕсене вуласа параççĕ.

2-мĕш ертсе пыракан: – Иванова вулать ман çĕрĕм-шывăм
Пăлхар, француз сума сăвать ăна
Мĕншĕн тесен
Нарспи вилсен те –
Сыввăн
Пирĕнпеле çӳрет-çке яланах.

1-мĕш ертсе пыракан: – Константин Иванов сăвăлла юмахсем те çырнă.

Халĕ 5-мĕш класра вĕренекенсем "Икĕ хĕр" юмаха лартса параççĕ.

Сценка " Икĕ хĕр" сăвăлла юмах

2-мĕш ертсе пыракан: – Питех те кĕске пулнă чăваш поэчĕн ĕмĕрĕ. К. Иванов шăпа картинчен иртме çуккине туйса 1914 çулхи çу кунĕнче чи юратнă вырăс классикĕн М. Ю. Лермонтовăн вил тăприне пуç тайма Таркана кайса килет, вара хура кĕркунне Чĕмпĕртен 3-мĕш хут Слакпуçне таврăнать. Хальхинче вăл тăван ялта ĕмĕрлĕхех юлать: 1915 çулхи пуш уйăхĕн 13-мĕшĕнче сăвăç чĕри тапма чарăнать.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлне К. Иванова асăнса шăп тăма ыйтатăп.

(1 минут залра шăплăх саманчĕ).

1-мĕш ертсе пыракан: – Çапла, 25 çулта вăхăтсăр сӳнет чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ. Вăл хăварнă çутă вара пирĕн пата нумай çул иртсен те йăлтăртатса тăма пăрахмĕ.

2-мĕш ертсе пыракан: – Çутçанталăк пекех, сăвăçăмăр вилĕмсĕр! Чаплă поэта сума суса сăвăçсем, композиторсем, ӳнерçĕсем, хайлавсем, юрăсем, картинăсем чылай çырнă. Районти шкул ачисем те вĕсенчен тĕслĕх илсе К. Иванов пултарулăхне куллен-кунах тĕпчеççĕ, тишкереççĕ, унăн çулĕпе малалла утаççĕ.

Итлесе пăхсамăр халĕ вĕсен пултарулăхне.

Шкул ачисем хăйсем çырнă хайлавĕсене вуласа параççĕ.

1-мĕш ертсе пыракан: Халĕ уява малалла тăсса шкулти фольклор ушкăнне сăмах парасшăн. Çамрăк чăваш çеçкесем сире чăваш чĕлхи кунне хисеплесе ятарласа концерт хатĕрленĕ.

(Уяв концертпа пĕтет)